Пăтша стройĕ бурйат халăхĕ çине йĕренсе пахни империализмăн йăрси вăхăтĕнче уйрăмах ăсса палăрса тăнă. Уйрăм приказ тăрăх бурйатсене (Россейăри ытти „йут халăхсене" те тыпри ĕçсене тума пуçха кайнă Çынсене выльăхсене хăваласа пекех хăваласа кайăк.

Октябĕр революцийĕ çитĕнни бурйат халăхне йăвар пусмăртăн хăтарчĕ. Революцин хыççăнхи йулташри вунă çул хушшинче кăна Бурйат-Монголири халăх ăшшĕ 17 процент ăсне. Ĕлĕк халăх ăшшĕ чакса пынă пулсан, халĕ ăсса пырат Çав вăхăтрах акакан çĕршăнтăкĕ икĕ çул, тулă акăсси тăвата хут, техникăлă культурăсем акасси çинĕ хут ăсне.

Бурйат-Монголи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен шултра районсем пулса тăрат. Бурйат—Монголири кусса çӳреке и халăх пурнăкăн районсенче йалхуçăлăх ертелĕн принципăлла устăне тăрăх, кашни колхозник киле 8 ĕнерен 10 ене таран, унăн пусне 100—150 сурăх тата качака, кирĕк те мĕн чухле кайăк-кĕшĕк, 10 лашă таран, 5 тĕверен 8 тĕве таран усрама пултарат.

Бурйат-Монгол республикĕ çĕрайĕнчи пурлăх тĕлĕпне пуйăн. Революцийчен унта строительсем ытларах çеç каштăх кăларнă. Ытти пурлăхсем çинчен пĕлмен. Халĕ çавăнпа çĕршывăн ытти районĕсенчен ытларах çынна вырнаçтарма пулать. Унта ăсатнă кĕмĕл, тĕслĕ металсем, кăмăл, слюда пыртакан çене выраçсем тупса палăртнă. Нефть шырас тĕлĕпне ĕçлеççĕ.

Республикăри çĕрлантăкĕнче 78 процентне вăрман йышăнса тăрат. Вăрман касса хатĕрлес ĕçе организацинене. Хăма çурăкан çăвăтсем туса лартнă. Кайăк тытас ĕç хăвăт ăсне пырат. Унта пакша тытассĕ, тенĕри чи хӳхем йышши соболь тытассĕ.

Йулашки вăхăтра собольсене пăтăрласа уçнă питомниксенче те çӳрете пуçланă.

Республикăри çĕрлантăкĕнче 78 процентне вăрман йышăнса тăрат. Вăрман касса хатĕрлес ĕçе организацинене. Хăма çурăкан çăвăтсем туса лартнă. Кайăк тытас ĕç хăвăт ăсне пырат. Унта пакша тытассĕ, тенĕри чи хӳхем йышши соболь тытассĕ.

Йулашки вăхăтра собольсене пăтăрласа уçнă питомниксенче те çӳрете пуçланă.

Республикăри çĕнтĕрĕнче—Улан-Уде—промышленнăçла пысăк хула пуласпырат. Унта паравуссем тата вакунсем йăсакан пысăк савăт туса лартнă. Çав савăт 50 мĕлӳн тенкĕ йăхăн ларнă. Механизацинене кантăк санăче, вăйлă аш-какай комбиначе тата темиçе вунă пĕчĕкрех предприйати туса лартнă.

Хуçалăхна пĕрле Бурйат-Монголин культурине ăсне пырат. Революцичен 92 процент хутăла пĕлмен çĕршывра пурне те хутăла вĕрентессине ĕçе кĕртнĕ.

Бурйат интеллигенцийĕ ăссе çитĕнне, 3 аслă шкул тата 9 техникум уçнă.

Кашни районрах хăçат тухса тăрат. Хăçатсем пуринчен ытла бурйат чĕлхипе тухассĕç.

Революцичч н бурйат халăхĕн «келмеслине" çĕç пирки пулнă. Халĕ вăл-таваллă республикăсен çемйинчи пĕртан правалă членĕ пулса тăрат.

Ĕлĕк ăна тыпри ĕçе тума выльăхсене хăваласа пек хăваласа кайнă. Халĕ çав халăх хăйĕн маттур йăланнăн çыннисенчен воровшиланă кавалериссен хурçа полкĕсене туса çитĕнтерчĕ.

Ĕлĕк бурйат халăхĕнче чурапа калаçма пек калаçна Халĕ вăл хăйĕн çыннисене Кремлĕ йăрат. Унта пĕсене-аслă Сталинпа унăн соратникĕсем йышăнса илеççĕ.

Сталин йулташалла тытса çĕклене ултă сулхи бурйатка, Гэлэ Мэркизова,—вăл Ленин—Сталин партийĕ бурйат халăхне мĕн тери çӳле çĕкленине кăтартса тăракан çимвал.

(И. Фрейлихăн „Страна Советˮ йăтăлă кĕнекинчен).

Кирпĕч савăчĕсен продукцийĕ çинчен.

Халăхи вăхăтра Чăваш республикĕнче пысăк та ответлă строительства ĕçĕсем пырассе: правительства çурчĕ, çĕнĕ савăт, Канаш—Шупашкар чукунçине т. ыт. те.

Çак вăхăтрах тата пуранмали çуртсем, ача йăçлисем, шкулсем тата нумай тумала, Канаш пирĕн республикăри Шупашкарпа—Ивайăри икĕ пысăк кирпĕч савăчĕ пахалăх йĕнчен начар продукци парассĕ.

Промышленнăç институчĕн строительства материалĕсен лаборатори катăртăр тăрăх, И ванайри савăт кăларакан кирпĕч III-мĕш сортран ытла хак илеймĕ-ст. Кунта тăвакан кирпĕчсен çитменлĕхĕ нумай, вĕсем сурăкшине, çиме тӳрĕ маррине I—II-мĕш сортла пулаймаççĕ.

Кирпĕчĕн пахалăхĕ начарри ăна тинĕхне тата çунтарнă чухнехи процеçе йĕркелĕ пулманиннен килет. Çавăнпа та Ивайăри кирпĕч савăчĕн çакăн çине тимлĕрех пăхмала.

Шупашкарти кирпĕч савăчĕн продукцийĕ те Ивайăрничен иртеймест. Хĕстĕрнине шыва тӳссе-лех çуйăмала правала вăрттăн сасăласа суйларĕç. Çакăн çинчен калат Чăваш АССР Конституцин 9-мĕш сыпăкĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлав округесем тăрăх суйласçе. Округ пуçне 12 пин çын пулат. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кашни суйлав округĕ пĕр депутат суйлама йăрат.

1938 çулти йĕнер 26-мĕшĕ—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсене суйламали кун. Вăл кун Чăваш халăхĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсене хăйĕн чи шанчăклă, чи лайăх ывăлĕсене суйласа, хăварăт. Чăваш халăхĕ чăн, малтан хăйне телей, сăваплăç, туллин пурнăç паракан, социалисăм патне инкек çитермĕ, пĕлем халăх йăрăтакан учителĕ, çулпуçне Сталин йулташа суйлат.

Аслă выраç халăхĕ хăйĕн темиçе ыйăм чи лайăх ывăлĕсен ячĕпе тăкса хăйне вăлăн тата ытти халăхсене вăлăн ирĕклех çĕнсе илчĕ, вăл пĕлем халăха капиталисăмсене улăштасене çĕнтермелли çула кăтартса пачĕ. Çавăнпа та ана пĕтĕм халăх ăçта сунса тăват. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсен суйлавĕсем, ытти социалла тата автономлă республикăсенчи Верховнăй Советсен суйлавĕсем пекех, совет халăхĕн никам çĕнтерейми политикăлă моралĕпе пĕрлехăн хăватне кăтартса пырĕç.

Чăваш республикĕнчи ĕçшăнăсем, партире тата партире тăман большевиксем, ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлама чухнехи пекех, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совĕ чĕсен суйлавĕсене пысăк çĕкленĕне иртерĕç.

Суйлавсем коммунистсене партире тăманнисен Сталинла блокăн çирĕплехне, унăн иккĕлми вăйне татах çĕнерен тепĕр хут кăтартса парĕç.

Х. Раскин.

Чăваш АССР Конституцийĕ тата çитес суйлавсем

Чăваш АССР Советĕсен Чрезвычайла XI-мĕш сĕçĕ 1937 çулти йĕнер 18-мĕшĕнче Чăваш АССР Конституцине (Тĕп Саккуне) йышăннĕ.

Пирĕн çĕршыври автономлă республикăсем пурте ССР Союзĕн Конституцийĕпе Союзăлă республикăсен Конституцийĕсене туса йышăнчĕç Кашни автономлă республик Конституцине республикăн хăйĕн уйрăмлăхсене хисеплĕ илсе тунă.

Чăваш АССР Конституцийĕ — вăл Чăваш çĕршывĕнчи ĕçсăмнисем Ленин—Сталин партийĕ йĕрттĕ пынине çĕнсе илнĕ социалисăмла çĕнтерӳсене кăтартса пыракан историлĕ документ. Вăл çĕнтерӳсем — ССР Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле ĕçлесе тунă çĕнтерӳсем. Çак документ вăл—большевиксен партийĕ, Совет правительстви чăваш халăхне пур йĕнепе те ирĕклĕн тата тулăнн ӳссе чечекленсе пыма кирлисене пĕтĕмпех туса пани çинчен калат. Чăваш халăхĕн хăйĕн государственăлăх пур. Вăл нумай нацилĕ Совет Союз çемйин пĕртăлла члене пулса тăрат. Пирĕн çĕршывра çеç, коммунистсен парти йĕртсе пыракан çĕршывра çеç пĕтĕм национальăссем, расăсем пĕрпеминех килештерсе тăвăлă пулăшма пултарассĕç.

Октябĕрти революци ĕлĕкхи прависарăлăха, пĕртанмарăлăх, чуçлăхна нушалăха пĕтĕмпех пĕтерчĕ. Киве Российăра ик-виç хут асапдăхра пурăнакан халăхсем государствăлăх çинчен шухăш тытма пултарайăнăн, вăл шухăша патша влăçĕ тискеррĕн пусарса пынă. Патша тата улутусемпе капиталиссен влăçĕ Российăри ĕçхалăхĕсемшен тĕрме режимĕ туса хунă.

Аслă социалисăмла тăван çĕршывăн хĕвелĕ айĕнче телейлĕ пурнăçпа пурăнат халăх пирĕн чăваш халăхĕ. Кашни кун вăл асла вырăс халăхĕн тăваллă пулăшăвне туять, унпала вăйхалланса ĕçлесе пырат.

Чăваш АССР Конституцин 13-мĕш статйинче çапла калана: „Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă Республикĕ РСФСР составне Автономлă Республика правине кĕрет.

ССР Союзĕн Конституцин 14-мĕш статйинче тата РСФСР Конституцин 19-мĕш статйинче катартнисĕр пусне, Чăваш Автономлă Советла Социалисăмла Республикĕ государства власне автономи йĕркине пурнăçа кĕртсе пырат.

Российăлă Советла Федеративлă Социалисăмлă Республикĕ асăлă вырăс халăхĕн республикĕ пулса тăрат. Вăл хăйне хăй тата патша империнне пурăннă пĕтĕм нацисене йĕркене кăларĕç. ССР Союзĕнчи халăхсен социалисăмшăн пыракан историлĕ кĕрешĕвĕнче малти рете тăрса ĕлĕк кайа йăлна, асапра пурăнна халăхсене мала илсе тухас тĕлĕпне сав тери пысăк пулăшу пачĕ. Пирĕн чăваш çĕршывĕ ордĕнлă республикăпа пулса тăчĕ. Чăваш АССР кашни гражданинĕ — РСФСР тата ССРС гражданинĕ пулса, пирĕн Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă Республикĕ РСФСР составне — вăйлă та хăватлă социалисăмлă государства составне кĕнине хĕпĕртесе савланăт.

РСФСР хăйĕн составĕнче 17 автономлă республикă, 6 автономлă облăç тата 12 нацилĕ округ пĕрлештерсе тăрса наци ыйтăвĕн политикине тĕрĕс татса панин пример пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕç.

„РСФСР Республикĕнче наци ыйтăвĕн тĕп шухăшĕ,—тенĕ Сталин йулташ пирĕн партин X-мĕш сĕçĕнче, национальăссем кăна йулташ докклад туса панă.

* * *

Майăн 28-мĕшĕнче ПСК(б)П Ленинград хулинчи V мĕш конференцийĕ уçăлна. Конференцине ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата ПСК(б)П Ленинград комитечĕн секретарĕ А. А. Ждановăн йулташ уçна. Ана делегатсем тăваллăн ала сунпине кĕтсе илнĕ.

ПСК(б)П Ленинград хула комитечĕн ĕçĕсем çинчен ПСК(б)П хула комитет секретарĕ Кузнецов йулташ доклад туса панă.

(ТАСС).

Радио итлеççĕ

Туппай Ĕмĕлри (Сĕнтĕрвăрри р.) „Красная Чувашия" колхозăн правленине радио кӳртрĕç.

Халĕ самăраçем кашни каçах ĕç хыççăн пуçтарăнса радио итлеççĕ.

Г. Мастйанков.

Чăваш АССР Конституцийĕ тата çитес суйлавсем

Чăваш АССР Советĕсен Чрезвычайла XI-мĕш сĕçĕ 1937 çулти йĕнер 18-мĕшĕнче Чăваш АССР Конституцине (Тĕп Саккуне) йышăннĕ.

Пирĕн çĕршыври автономлă республикăсем пурте ССР Союзĕн Конституцийĕпе Союзăлă республикăсен Конституцийĕсене туса йышăнчĕç Кашни автономлă республик Конституцине республикăн хăйĕн уйрăмлăхсене хисеплĕ илсе тунă.

Чăваш АССР Конституцийĕ — вăл Чăваш çĕршывĕнчи ĕçсăмнисем Ленин—Сталин партийĕ йĕрттĕ пынине çĕнсе илнĕ социалисăмла çĕнтерӳсене кăтартса пыракан историлĕ документ. Вăл çĕнтерӳсем — ССР Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле ĕçлесе тунă çĕнтерӳсем. Çак документ вăл—большевиксен партийĕ, Совет правительстви чăваш халăхне пур йĕнепе те ирĕклĕн тата тулăнн ӳссе чечекленсе пыма кирлисене пĕтĕмпех туса пани çинчен калат. Чăваш халăхĕн хăйĕн государственăлăх пур. Вăл нумай нацилĕ Совет Союз çемйин пĕртăлла члене пулса тăрат. Пирĕн çĕршывра çеç, коммунистсен парти йĕртсе пыракан çĕршывра çеç пĕтĕм национальăссем, расăсем пĕрпеминех килештерсе тăвăлă пулăшма пултарассĕç.

Октябĕрти революци ĕлĕкхи прависарăлăха, пĕртанмарăлăх, чуçлăхна нушалăха пĕтĕмпех пĕтерчĕ. Киве Российăра ик-виç хут асапдăхра пурăнакан халăхсем государствăлăх çинчен шухăш тытма пултарайăнăн, вăл шухăша патша влăçĕ тискеррĕн пусарса пынă. Патша тата улутусемпе капиталиссен влăçĕ Российăри ĕçхалăхĕсемшен тĕрме режимĕ туса хунă.

Аслă социалисăмла тăван çĕршывăн хĕвелĕ айĕнче телейлĕ пурнăçпа пурăнат халăх пирĕн чăваш халăхĕ. Кашни кун вăл асла вырăс халăхĕн тăваллă пулăшăвне туять, унпала вăйхалланса ĕçлесе пырат.

Чăваш АССР Конституцин 13-мĕш статйинче çапла калана: „Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă Республикĕ РСФСР составне Автономлă Республика правине кĕрет.

ССР Союзĕн Конституцин 14-мĕш статйинче тата РСФСР Конституцин 19-мĕш статйинче катартнисĕр пусне, Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă Республикĕ РСФСР составне Автономлă Республика правине кĕрет.

Российăлă Советла Федеративлă Социалисăмлă Республикĕ асăлă вырăс халăхĕн республикĕ пулса тăрат. Вăл хăйне хăй тата патша империнне пурăннă пĕтĕм нацисене йĕркене кăларĕç. ССР Союзĕнчи халăхсен социалисăмшăн пыракан историлĕ кĕрешĕвĕнче малти рете тăрса ĕлĕк кайа йăлна, асапра пурăнна халăхсене мала илсе тухас тĕлĕпне сав тери пысăк пулăшу пачĕ. Пирĕн чăваш çĕршывĕ ордĕнлă республикăпа пулса тăчĕ. Чăваш АССР кашни гражданинĕ — РСФСР тата ССРС гражданинĕ пулса, пирĕн Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă Республикĕ РСФСР составне — вăйлă та хăватлă социалисăмлă государства составне кĕнине хĕпĕртесе савланăт.

РСФСР хăйĕн составĕнче 17 автономлă республикă, 6 автономлă облăç тата 12 нацилĕ округ пĕрлештерсе тăрса наци ыйтăвĕн политикине тĕрĕс татса панин пример пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕç.

„РСФСР Республикĕнче наци ыйтăвĕн тĕп шухăшĕ,—тенĕ Сталин йулташ пирĕн партин X-мĕш сĕçĕнче, национальăссем кăна йулташ (хуçалăх, политикă, культура йĕнепе)—çакна епĕр иртнĕ пурнăçран туйăнса йултăмар,—петтерсси çав кăна йăлна халăхсене государствăлăх йĕнепе те, культура йĕнепе те, хуçалăх йĕнепе те вăтăçĕр Российăна хуса çитмели майсем туса парасси пулать".

Совет чăваш çĕршывĕ çак заталăсене пурнăçа йăнăлăн кĕртсе вăйлăн ӳссе чечекленчĕ. Чăваш республикĕн Конституцийĕ—пирĕн партин Ленинла-Сталинла наци политики тĕрĕс пулнине катартса тарат. Ленинла—Сталинла наци политикине пурнăçа кĕртсе епĕр производствăна, йăлхуçăлăх, культура йĕнепе пысăк çĕнтерӳсем турăмăр. Ĕлĕк кайа йăлна, тĕттĕмлехпе хут пĕлменлĕх, прависарăлăх пуçлемне кулаксем, патша улпучĕсем пуçпулса тăна чăваш çĕршывĕ—халăх-ăна социалисăм çĕнтерӳсем çĕршывĕ пулса тăчĕ.

Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă Республикĕ рабочисем-не хресченсен социалисăмла государственăлăхĕ пулса тăрат,—тенĕ Чăваш республикĕн тĕп саккуне. Çак статйа ĕçсăмнисем чăваш çĕршывне социалисăмла çĕршыв туса хуçас йĕнепе ку тăранчен кĕрешсе илнĕ çĕнтерӳсене çитĕлтесе çав тери пысăк пулăшу парат. Вăл совет чăваш çĕршывĕ—социалисăм çĕнтерне çĕршывăн уйрăлми пайĕ пулса тăнăн çинчен калат. Пирĕн республикăри кашни гражданин çав тивлетпе ĕçлекенсе хĕпĕртет, савăнат, боļшевиксен партине, ССРС халăхĕн аслă ашшине, ĕçсăмнисен йăратна çулпуçне Сталин йулташа чĕререн тав тăват.

Чăваш АССР политикăлă никĕсĕ çинчен ЧАССР Конституцин иккĕмĕш статйа çапла калат:

„Чăваш АСС Республикĕн политикăлă никĕсĕ—ĕçсăмни депутачĕсен Совечĕсем, помещăксемпе капиталисен влăçне сирпĕтсе антăхнипе, пролетари диктатурин çĕнтерĕсе илнипе, чăваш халăхне патша йĕркин тата вырăс империализмăла буржуазин нацилĕ шучăмăрлăхĕнчен хăтарнипе тата национализла контрреволюцилле сăмĕсĕ тăкнипе ӳссе çирĕпленнĕ Советсем пулса тăрассĕç".

Чăваш АССР государствă влăçĕн чи асăлă органĕ—Чăваш АС.Р Верховнăй Совечĕ пулса тăрат. Ана епĕр кăçалхи йĕнерĕн 26-мĕшенче суйлатпăр. Вăл пĕр палатăран тăрат. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ пирĕн республикăн саккун кăларакан пĕртен-пĕр органĕ пулса тăрат.

Чăваш АССР Конституцин 8-мĕш сыпăкĕпе РСФСР Конституцин 11-мĕш сыпăкĕпе тата ССРС Конституцин 10-мĕш сыпăкĕпе пĕрешкелĕ. Ку сыпăк граждăнсен тĕп прависемне обязанăссем çинчен калат. Çака ăла С Р Союзĕнчи халăхсен пĕртăллăхĕпе таванлăхне, Ленинла—Сталинла наци политикин чаплăлăхне тата та тепĕр хут катартса парат. Чăваш А.С Республикăн кашни гражданинĕ ытти союзла тата автономлă республикăсенчи граждансемпе пĕртан правасемпе усă курат. Ĕçлев прави, кану прави, вĕренӳ парăви, ватăлсан, çавăн пекех тата чирлесен ĕçлемелли пулсан пурăнмашкăн пулăшу илмели права, общăествăла организацисене туса вĕсене пĕрлешме права, граждансен национальăсене расине тата аръсинпа хĕрарăмсене пăхмасăр пĕртăлла правана усă курасси, граждансене хăйсене тата вĕсен кил-çурăсĕсене текенмелле мар правасем т. ыт. те—çак-сене пурне те социалисăмăн пыракан кĕрешӳре çĕнсе илнĕ. Вăл правасене пĕтĕмпех Чăваш АССР Конституцийĕ çине çырса хунă.

Республикăри совет граждăнĕсене панă аслă прависене граждансем çине хунă обязанăссеннисем уйăрса илме май çук. ЧАССР Конституцин 97-мĕш статйи çапла калат:

„Чăваш АСС Республикĕн кашни граждăнине Советла Социалисăмлă Республикăсен Союзăн, Российăлă Советла Федеративлă Социалисăмла Республикăн тата Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă Республикăн Конституцийĕсене тытса пыма, саккунсене пурнăçа кĕртсе пыма, ĕçлев дисциплинине çирĕплетма, общăественăлăн туса линĕлле тӳррен туса, сотни лисăмлапе пĕрлешӳре пурнăç йĕркисене хисеп ĕмĕ тивĕç".

Общăественăлă, социалисăмла хăрăлăха упраса, çирĕплетесе пырасси, пурне те тивĕç çар обязанăнăçе—вĕсем пурăннăн те саккун пулса тăрассĕç, гр жданинăн тăвăн çĕршыва сыхлас таса тивĕçĕ пулăçĕ.

„Тăван çĕршыва сыхлас и—тет Чăваш А. Р Конституцин 100-мĕш статйи—Чăваш АССР кашни гражданинĕн чи таса тивĕçĕ. Тăван çĕршыва пăрахса тăшăлана сутăнни: при.аса пасни, ташман ĕнне куçни, государствăн çар вăй-хăватне сийĕн туни, шпионла и—чи навар усăл ĕç туни вырăнĕ шутласа, саккунăн мен пур хăварлăхĕпе аиапланат".

Сталинла Конституцин статйисен кашни йĕркипе социалисăмла государственăн вăй-хăвăнне çинчен калат. ССР Союзĕн телейлĕ гражданĕсем хăйсен аслă тăван çĕршывĕпе мухтанса савăнаççе. Вăл статйасем совет халăхĕ Ленин—Сталин парти тавра, пирĕн тăван тата аслă Сталин тавра таччăн пĕтĕсĕн çиччĕн, совет халăхĕн политикăлă моралĕпе пĕр ĕçĕ çирĕплĕн çиччĕн калаççĕ. Конституцин статйисем пĕтем çынсет халăхĕн чĕри тăшмансене—тăван çĕршыва сутакан ирсерсене çав тери хăйăр курăнманлăхпа тулли çиччĕн калаçĕ. Вăл статйасем пирĕн тăван çĕршыва сутакансене, нимĕç-йăпонь фашисăмĕн агенчĕсене—троцкистла бухăринла, буржуазла-националисла шпионсене, етемлĕхĕн сăнашкал ытти ирсĕр тепренчĕкесене пĕтĕмпех пĕтерсе хума пултракан совет саккунĕн пысăк вăйĕ çиччĕн калаççĕ.

Пирĕн республикăн государственăлăхĕн аслă органĕне—Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлавçасен пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ. Çакăн çинчен калат Чăваш АССР Конституцин 9-мĕш сыпăкĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлав округесем тăрăх суйласçе. Округ пуçне 12 пин çын пулат. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кашни суйлав округĕ пĕр депутат суйлама йăрат.

1938 çулти йĕнер 26-мĕшĕ—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсене суйламали кун. Вăл кун Чăваш халăхĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсене хăйĕн чи шанчăклă, чи лайăх ывăлĕсене суйласа, хăварăт. Чăваш халăхĕ чăн, малтан хăйне телей, сăваплăç, туллин пурнăç паракан, социалисăм патне инкек çитермĕ, пĕлем халăх йăрăтакан учителĕ, çулпуçне Сталин йулташа суйлат.

Аслă выраç халăхĕ хăйĕн темиçе ыйăм чи лайăх ывăлĕсен ячĕпе тăкса хăйне вăлăн тата ытти халăхсене вăлăн ирĕклех çĕнсе илчĕ, вăл пĕлем халăха капиталисăмсене улăштасене çĕнтермелли çула кăтартса пачĕ. Çавăнпа та ана пĕтĕм халăх ăçта сунса тăват. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсен суйлавĕсем, ытти союзла тата автономлă республикăсенчи Верховнăй Советсен суйлавĕсем пекех, совет халăхĕн никам çĕнтерейми политикăлă моралĕпе пĕрлехăн хăватне кăтартса пырĕç.

Чăваш республикĕнчи ĕçшăнăсем, партире тата партире тăман большевиксем, ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлама чухнехи пекех, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совĕ чĕсен суйлавĕсене пысăк çĕкленĕне иртерĕç.

Суйлавсем коммунистсене партире тăманнисен Сталинла блокăн çирĕплехне, унăн иккĕлми вăйне татах çĕнерен тепĕр хут кăтартса парĕç.

Х. Раскин.

Вольтĕр

(Вилнĕренне 160 çул тултарнă тĕле)

Французсен паллă писатĕлĕ Вольтер 1694 çулта çуралнă. Ашшĕ-суть чиновникĕ, амăшĕ унăн дворянкă пулнă. Литературăра малтанхи ăнăçусене тупа хыççăнах, çамрăк литератăр хăйĕн буржуаль йăтне—Аруене парахса, Вольтер йăта йышăнат. Унăн чăн йăвĕне хушамачĕ—Мари Франçуа Аруе.

Малтанхи вăхăтра Вольтĕр писатĕле дворянсем-çынсланман. Аристократи те йунаса çеç пурăннă. Пĕр пуçан дворянăн тăрçи çамрăк поэта хĕнесе пĕтерне. Поетăн чăрсăрлăхĕ килĕшмен вĕсене. Хăйĕн сатирăлă сăвăсемшĕн Вольтĕр тĕрмере те ларнă. Тĕрмерен тухнă хыççăнах, Вольтере Франциран каларса парăççĕ.

Виçĕ çул хушши (1726–1729) Англире пурăнни Вольтĕршĕн нитĕ усăлă пулнă. Вăл унта наукăсене, философине вĕренет. Произведенисем нумай çырат. Унти халăх унăн произведенийĕсене йăвăртса вулана. Часах кунта та поета хирĕç тăшмансем тупăнаççĕ. Король тата тĕп çынсисем Вольтера курăнми пуласçĕ, ăна Англирен каларса парăççĕ.

Çавăн хыççăн, Вольтĕр хăйĕн пĕтĕм пурнăçне тĕнче тăрăх çуресе иртнĕ. Пĕр вăхăтра Пруççи короле патне пырса, унта пурăнма тытăнă. Король килĕшсе пурăнман пирки, Вольтĕрĕн кунтан та тухса тармала пулна. Çапла, Франци кăна мар, пĕтĕм Европа Вольтĕртан шикленĕ. Шиноксем ун хыççăн чĕрлесе çурене, палачсем ун кĕнекисене вута пăрахса çунтарнă. Ун кĕнекисене наборлакан наборщиксемпе переплетчиксене тĕрмене хупнă. Вольтĕр Швейцарире çеç лăпкă выран тупма пултарнă. Вăл нумай вăхăт Ферней патăлă вырăнта пурăннă. Çав вăхăтра ун патне Европăран пур теçĕнчен те çынсем çурене. Ана Ферней патриархĕ, тесе чĕнне.

Пупсем, кивĕ тĕнчешĕн вăтам емĕрти çĕрле путланнă вăркешĕн çаксăнсем Вольтера мĕншĕн çав тери курăмланни палă. Хăйăр та савăнăçла кула вĕсем чĕрине ыраттарна.

Вольтĕр хăйĕн „Орлеанская девственница" ятлă сăвăла произведенине таса хĕр Жанна д'Арка çирĕп сывлăхлă, савăнăçла хресчен хĕрĕ туса катартна. Унăн поеминче çвегуй хĕвел шевли çине ларса çÿрет. Ку ĕнтĕ тура кĕнекисен „çÿлти тĕнче" çинчен çырнине машкăласа тăра шыв çине кăларни пулаç.

Вольтĕрĕн кулли сăпа пек тивме пултарнă. Çава ĕнтĕ—унăн сатирин хăйăр вăйĕ. Короçсемпе дворянсем жандармсене Вольтера вăрçласе мĕн хушнă вăхăтрах хăйсем ахалтатса кулна. Вольтера хăйĕн кĕнекисемпе чĕртнĕ вутра çунтарса йăма шутлакан пупсем те çын курман çĕрте вăртăн кулна. Вольтера кулă чапа кăларнă. „Хисеплĕ сийрен" тухнă писатĕл Йевропăн коронасăр патши пулса тăнă. Короçсем унпа Туслашма тăрăшнă. Мĕншĕн? Паллах, вĕсем. Вольтĕр хăйсем çинчен мĕн те пулин çырасран хăранă, çавăнпа унпа йăпăлатнă. Вырăс патши—иккĕмĕш Кĕтĕрне Вольтера хăйĕн учителĕ вырăнне хурса мухтанă, ун патне йăпăлатса çырусем çырнă, Россине килме чĕнне.

Пĕтĕм тĕнчипе мухтава тухна çынна вăрçлесе лартма çамăлах пулман. Çавăнпа 84 çулхи Вольтĕр, хăйĕн пурнăçĕн йăлашки çулĕсене тăвăн çĕршывĕнче иртерме шутласа Париже хăйăлăнас пырса кĕнĕ. Ана халăх мухтавлăн кĕтсе илнĕ. Пупсем шала çыртса чĕмесĕр тăнă. Вольтĕр вилсен, пупсем унăн ÿтне Парижре пытартарман.

Вольтĕр революционер пулман, анчах халăха çутта кăларассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ. Çавăнпа та халăха пусмăрласа пурăнакансемшĕн Вольтĕр йăт пулнă.

Йăкобинесем, хăйсем халăх массин пуçĕнче пыма тытăнсан, Вольтĕрĕн пупсем „ыттăрма" йышăнман ÿтне малтанхи вырăнтан, пысăк чис туса, Франции чи чаплă çынĕсене пытăракан вырăна—Пантеона кусăрна.

Кайăрахна, реакци çĕнтерсе илсен, дворянсемпе пупсем Вольтĕрĕн тупăкне Пантеонран каларса парахна. Вĕсем Вольтĕрĕн вилнине те пулин уриха пыта пек туллама тытăнна. Чĕрĕ чухне унран хăраса тăнă.

Вырăс майра-патшин Вольтера йăватасси те вăл вилнĕ хыççăнах вырăссен палла вольтерианене—Радищева арĕслесе Сĕнĕре асатнине вĕсленĕ.

Халĕ те фашисла çĕршывĕнче палачсем Вольтĕр кĕнекисене пĕтĕм халăх умĕнче илханса çунтарассĕç. Апла пулсан, Вольтĕр произведенийĕсем халĕ те хăйсен вăйне çухатман.

Вольтĕр пĕтĕ нумай çырнă, тухăçлă ĕçленĕ. Вăл çырнисем çĕр çомран та иртеççĕ. Вĕсем—романсем, пысăк трагедисем, историпе тата философипе çырнă кĕнекесем, сатирăла поемăсем.

Вольтĕр хăйĕн художествăлă произведенийĕсемне çеç мар, историпе тата философипе çырнă кĕнекисемне те канăлласăм тĕнчине чĕртентерĕ. Вăл, халăхсен историпе пĕрремĕн хут тура мар, етем ăс-тăнне тунине, халăх тунине кăтартса парса, ун чухнехи истори наукинче çĕнĕ тапхăр пуçласа йăнă. Вольтĕр хăйĕн вăтăнче историпирки пулнă тĕрĕс мар ăнланăна çемĕрсе такăна.

Вольтĕр етемлĕхĕн аслă писатĕлĕсемпе философĕсен шутĕнче тăрат. Францисен, кирек мĕнле хăтлансан та, унăн патне çав чаплă вырăнтан черçе ыпрахаймаççĕ. Халăх, хăйĕн паттăр геройĕсене манмăн пекех, писатĕлĕсене те йăлана аçра тытса тарат. Тĕнчери ĕçлахăхĕ Вольтĕрĕн çивĕч сатирисене вуласа, куçăтура тăшманĕсемпе, етемлĕх тăшманĕсемпе кĕрешме хавхаланат.

Вольтĕр пурнăчĕн ытла Российăпа çыхăх. Унăн библиотеки Российăра упранат. Вырăс писатĕлĕсем Вольтĕртан вĕренсе пынă. Çамрак Пушкин ун пирки çапла çырса хăварнă:

О Вольтер, о муж единственный,
Ты, которого во Франции
Почитали богом некоим,
В Риме дьяволом, антихристом,
Обезьяной в Саксонии.
Ты, который на Радищева
Кинул было взор с улыбкою,
Будь теперь моею музою.

Вырăс литературине Вольтĕр пысăк йĕр-хăварнă. Радищевăн Вольтĕрпа пĕр шухăнла пулнăшăн хăйĕн пурнăçне сухатнă.

Герцена—вырăс Вольтерĕ, XIX-ш емĕрти Вольтер, тесе йăт пана. Ку йăта илме Герцен тивĕçле пулнă. XVIII-мĕш емĕрте Вольтĕр хăйĕн çĕршывĕшĕн—Франкишĕн, çавăнна çĕрлех пĕтĕм Йевропăшăн, пĕтĕм етемлĕхшĕн мĕскер туна, Герцен та хăй пурăннă вăхăтра хăйĕн çĕршывĕшĕн çав çĕре туна. Герцĕнан „Колокол" журнал) крепăсла Российĕре сывăпаканскене ыйăхран вăратна, общественăлăх чĕрĕ, малта тăракан пайне хаваслантарна, шикленĕ чĕрелликене хăратса парахна. Микулай патша влаçĕн масар çинчи пек тĕксĕм шăплăхĕне килĕшнĕ çынсем „Чанăн" хыттăн йăнраса тухакан революцине сасăна чăтма вăтăраймаç. Пурнăчĕн-тăлă Герцĕнăн вичкĕн кулли хăратнă вĕсене. Герцĕн двориналла интеллигенцин ыйăхăлă анкă-минкĕ-лехĕнчен чарăнусăр кулнă, хысна шучĕне пурăнакан „светуйсенчен", самодержавине православи „чудасем" тума пултаракан вăйăсенчен машкалана. Вольтĕр—нумай писатĕлсен учителĕ. Совет халăхĕ Вольтĕрĕн пурнăçа чăн кăтартса паракан произведенийĕсене пысăк хак парат, ăша кăмăлпа вулаç, вĕсене çутаракан фашиссене чĕрĕрен ылханат.

Французсен паллă философĕ, поечĕ тата историкĕ Франсуа Мари Аруе Вольтĕр вилнă майăн 30-мĕшĕнче 160 çул тултарат.

УКЕРЧĔК СИНЧĔ: Франсуа Мари Аруе Вольтĕр.

Жан Гудон мрамăртан туна бюçĕ (Ермитаж).

Дирижабльсен çĕрлехи вĕçевĕсем

МУСКАВ, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Майăн 27-мĕшĕнче, каçхине, çĕрлехи тренировкăлă вĕçене ике дирижабль — „СССР В—1" (командирĕ Почекин ăулташ) тата „СССР В—8" (командирĕ Почекин ăулташ) туçса кайнă.

„СССР В—8" сывлăш карапĕ сывлăша 22 сехет те 45 минутра вĕçсе хăпарнă. Вăл дирижабль порчĕ синĕнче темиçе хут вĕçсе çаврăнса, 23 сехет те 44 минутра Ленинграда кайма çул тытнă. Майăн 28-мĕшĕнче 2 сехет 45 минутра „СССР В—8" дирижабль Вышний Волочекран иртсе, хăй тытна çулпа тĕрĕс вĕçсе пынă. Ирхине 4 сехет те 55 минутра сывлăш карапĕн командирĕ Почекин ăулташ çапла пĕлтернĕ: маршрутра çанталăк аван, çил вăйĕ пĕр сехетре 15–18 километр, çăмăр тавраш çумаст, тавралăх 10 километр таран курăнат.

Ирхине 7 сехет те 30 минутра „СССР В—8" сывлăш карапĕ Ленинграда ăнăçла çитнĕ.

„СССР В—1" дирижабль майăн 27-мĕшĕнче, каçхине сывлăша 12 сехет вĕçсе, бивуака (çуçă вырăнта дирижабльсем тăмали опытлă площадкă) анса ларнă.

Ĕнер ирхине Кулик инженерăн пройекчĕне туна çĕнĕ çăмăл дирижабль „СССР В–10" тренировкăлă вĕçнĕ. Ку карап сывлăшра 3 сехет пулса, вĕçевĕн лайăх пахалăхне кăтартнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фонтра, Билагера районĕнче (Лериданран сурçĕрне хĕвелтухăç енне) тата Серос патĕнче (Лериданран кăнтăрпа хĕвеланăç енне) республика сарăсем хăйсен позицине лайăхлатнă.

Хайăр сапаçусем Кастельфорт районĕнче пулса пырассĕç, унта лăхăнсăсем пысăк çухату пулса пырат пулсан те вĕсем хăйсен линисене хăшăтах чăлăла кусăрнă.

Ытти фронтсенче улшăну çук.

(ТАСС).

Республикăлă Испанине пулăшни

1937 çулта Америкăрăн фашисма хирĕç кĕрешекен тĕрле организацисем Испани республикине пулăшма пĕр мĕлйун доллăра йăхăн пухнă.

Республикăлă Испанине паллă писатĕлсем, артистсем тата Америкăри интеллигенцин ытти представителĕсем те материалла пулăшу парассĕç.

(ТАСС).

Чăваш АССР Çар Халăх Комиссариачĕн ПРИКАЗĔ

Майăн 22-мĕш, 1938 çул №50 Шупашкар хули.

Хĕрлĕ Сăран Мобилизацири Управленийĕ 1938 çулта мартăн 29-мĕшĕнче пана 169484 №-лĕ директивĕ тăрăх, Чăваш АССР территорийĕнче государствăн „Колхозсен, йĕлиполичникĕсен Хĕрлĕ Çар службине йăвăрлă лашисене, повозкăсене, кÿлмели хатĕрсене тата 3 çула ситнĕ тыхăсене июнĕн 15-мĕшне июлĕн 1-мĕш хушшинче тĕрĕслеç комитетĕ туса иртĕрмелес: Унăтăр, Ишлей, Йĕлчĕк, Вăрмар районĕсенче пур лашасене те пăхса тĕрĕслемелес.

§ 1

Лашасем обозсен тата кÿлмели хатĕрсен смотăвне районти çар комиссарĕ уйăрнă комиссиесем туса иртерессĕ, ку комиссии председательĕсем лашана лайăх вĕлес тăракан çапăсри-командирсем пулассĕ, членĕсем: вылăх тухтăрĕ тата хăй вăлесоветне, кĕрекен лашасене пăхтаракан вăлесовет председательĕ.

§ 2

Смотăрта, Хĕрлĕ Çар ретне йăвăрлă лашасемсĕр пусне „ЛКА" фондне уйăрна лашасем те тата йăвăрлă повозкăсемпе кÿлмели хатĕрсем пулмала. Пур обозсем те Хĕрлĕ Çар ретне йăвăрлă лашасене вилес тăрăх йăвăрлă хатĕрсене кÿлес пулмала.

Смотăра пымалă выраçмасемпе вăхăтсене пĕр вăйăтăкомсем районри çар комиссĕресемпе килĕшпе тăрăх кăтартса парассĕç.

§ 3

Смотăр пулмали выраçна йăлосовет председательĕсен (комисси членĕсен) лашасемпе тата обозсемпе пымала, вĕсен сумĕнче йĕлиполичник лашисен паспăрчĕсем тата паспăрт кенекисем пулмала. Колхоз председательĕсемпе асăлă конъюксем те, лашасен паспăрчĕсене хăйсенчен хăвармасăр, смотăра райĕстăком кăтартнă вăхăтран кайă йулмасăр ситмелĕ.

§ 4

Июньĕн 10-мĕшĕне 15-мĕшĕ хушшинче сăкăшкал ĕçсем туса иртермелес:

а) Кашни йăлосоветăн комисси организацилемелес, оборонăй секции руководителĕ сав комиссии председательне пулмала, ун пекех: вылăх-чĕрлĕх секцин руководителĕ тата осоавиахим пуçламĕш организацин представителĕ. Килĕрен киле çуресе Хĕрлĕ Çар ваçлăн йăвăрлă обозсене, кÿлмели хатĕрсене палăртса йăлосовета тата, тĕрĕслеç смотăрĕн комиссине кирлĕ спиçăк хатĕрлес ĕç чак комисси сине тивет.

б) Пур лашасен паспăрчĕсене, паспăрт кенекине мĕне сыреа пынине, лашасем тата кÿлмели хатĕрсем мĕне ĕçлемине тĕрĕслесе' тухмала. „Уйрăмăнах Хĕрлĕ Çар ваçлă" фондне кĕрекен лашасене тата тыхăсене мĕне пăхса усранине тĕлĕнĕ тĕрĕслемелес. Палăртнă ситменлĕхсене пурне те-кăтартса акт сырмала, вăл ситменлĕхсене мĕне пĕтерни синчен çăнаса тăмала, актăна тĕрĕслеç смотăрĕн комисси председательĕ аллине памала.

в) Хĕрлĕ Çар службине йăвăрлă мар лашасене, райĕстăком пана формăсем тăрăх шутласа тухмала, вара ана комиссине пама йăлосовета тăвăртмала.

§ 5

Йăлосовет председательĕсем смотăра хатĕрленеç ĕç мĕне пынине, савăн пекех, лашасене мĕне пăхса, мĕне ĕçлеттинине пĕлме тĕрĕслеç —организацилемелес. Тĕрĕслеç планĕсене райĕсткомсем июньĕн 10-ĕмĕн тĕлне тăвăтлăн тĕрĕслеç ятăсене комисси председательне лашасене смотăра илес тухнă кун памала.

§ 6

Лашасене, обозсене тата кÿлмели хатĕрсене колхозсен те йĕлиполичникĕсен те смотăра организацилеç йĕркене илес тухмала. Çав кунхине лашасене йĕрен хăтармала, вĕсене тасатмала, чĕрнисене касса тикĕсмелемелес.

§ 7

Лашасене, обозсене тата кÿлмели хатĕрсене смотăра йăлес тухмăшăн тăракан ĕç-не вĕсене пытарса хăваракансем уголовнăй йĕркепе айăпланассĕ.

Чăваш АССР Çар Комиссарĕ
Капитан Илакин.

Бригадăсенче стена хаçачĕсем йĕркелĕ тухаççĕ

Шăплатри (Вăрмар р.) „Радио" колхоз сумĕнчи пуçламăш комсомол организацийĕ тăрăшнипе, колхоза кашни бригадăрах стена хаçачĕсем йĕркеллĕн тухса тăраççĕ. Редактăрсенче комсомолăсем ĕçлеççĕ. Хаçатсене çакма йăтарласа тунă витринă пур. Витринине халăх пухăнакан çĕрте, урамра тунă.

Н. Трофимăв.

Çамрăксем çырăççĕ

„Учитĕл" физкультурă общинĕсĕрти Шупашкарти педагогикă рабфакĕнчи студентсем хушшинче ике футбол команди организацилерĕ. Командăсем çирĕплесех пыраççĕ.

П. Гаврилăв.

Турлетни

„Чăваш Коммунĕн" ĕнерхи номерĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канашри вакуисем йăсакан сăвăрни тимĕрçесен пехăн начальникĕн Константин Тимофейевич Назарăв йăлташ кандидатурине регистрацилене суйлав округĕ ятне тата номерне йăнăш пичетленĕ.

К. Т. Назарăв йăлташ кандидатурине Канаш хула суйлав округĕ № 55 тăрăх регистрацилене.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар хулинчи 11-мĕш участкăри суйлав комиссийĕ пĕлтерни

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар хулинчи 11-мĕш участкăри суйлав комиссийĕ адресĕ çапла: Угол улицы Володарского, школа № 6. Телефон № 7–60.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чăваш АССР Сутĕç Халăх Комиссариачĕ

Улатăрти, Патăрйелĕнчи, Канашри, Нурăсри, Пăрачкăри, Çĕрпÿри, Шупашкарти тата Йĕтĕрнери педагогикă училищисен 1-мĕш каласĕсене 1938–39 вĕренÿ çулĕнче вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет.

Педагогикă училищисен 1-мĕш класне тулăмăр вăтам шкул пĕтĕрнисене тата вăтам шкулта 7 çул вĕреннисене 15 çулхисенех 35 çулхисем таран илеççĕ.

Заявленĕсене училищăсен директăрĕсем йăнăше памала, пĕрле çак документсем кирлĕ:

а) Хăш çулта çурални çинчен свидетĕлства;
б) Вĕренни çинчен свидетĕлства;
в) Икĕ фотокартăчкă (кашнин çине алпуçса çирĕплеттормелĕ).
г) Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ справкă.

Документсене подлинниксене çеç памала. Заявленисене июньĕн 10-мĕшĕчен пуçласа августăн 15-мĕшĕчен йышăнаççĕ.

1-мĕш класа вĕренме кĕрекенсем пурте, отличниксемсĕр пуçне, августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕчен-испытани тытассĕ—тулăмăр вăтам шкул программи тăрăх вырăс чĕлхине, чăваш чĕлхине, арифметикăна (сыпăтăрса тата сăмахпа) алгебрăна (сыпăтăрса), географине, геометрине тата СССР Сойузăн Конституцийĕне (сăмахпа).

Шкул уйрăмăсемсĕр пуçне педучилищăсенче тата çакăшкал уйрăмсем пур: Улатăрта—библиотекă уйрăмĕ, Канашра—шкул çулне çитменнисен уйрăмĕ, Йĕтĕрнере—физкультурă, Патăрйелĕнче—тутăрсен (шкул) уйрăмĕ.

2—1

Чăваш АССР Йустици Халăх Комиссариатне машинистка кирлĕ

Калрсен пайне пымала.

Шупашкарти ерех савăтне

бухгалтĕрсем-3,
бухгалтăр помощникĕсем 2
тата машинистка
кирлĕ.

Директи.

Квалификацилĕ официантсем кирлĕ

Çак адресне пымала: Шупашкар, Кадыков урамĕ, 5. Пĕрлешÿлĕ апатланас тĕлĕшне ĕçлекен уйрăм.

2—2

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА

малтан ĕçлесе пурăннă рабочисене—ĕçуçки илеймеллисене

укçа илме пыма чĕнеççĕ

Укçа илме рабочни хăйĕн пымала ĕе почтă урăд сыруна хăш вăхăтра, мĕнле строительствăра, хăш бригадăра тата килти тĕрĕс адресне тĕлĕнех сырса пĕлтерсен, (пĕрлех мĕн чухлĕ ĕçленине кăтартăнах расчот кĕнекине ĕе расчот хутне памала), укçа парассĕç.

Претензисем тăратмалли срук çак пĕлтерÿ çапăннă кунранпа 1938 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен.

Чăвашстройтрест.

3—3

ЧĂВАШПРОМКАССĂН

Чăваш АССР 12 çул ĕçлĕче тăракан

каниволи çуртне

БУХГАЛТĔР

вăсламăлă кирлĕ

ПĔЛТЕРÛ

Правительствăпа Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă займне кăларма решени йышăнна. Займа перекет кассисем урлă халăх хушшинче укçала çеç сутассĕç. Облигацисене нумай сруксенче тÿлеме ĕе çырăнна тăрăх сармаççĕ.

Государствăн 1938 çулхи Шалти выигрышлă займ облигацийĕсем перекет кассисем кирек хăш вăхăтра та ирĕклĕн сутаççĕ тата кăлăла сутăн илеççĕ. Малтанлăха ку займ облигацийĕсене 1938 çулхи июньĕн 1-мĕшĕнчен хăйĕн хакĕпе сутаççĕ, июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ кăтартса пана хакĕсемпе сутаççĕ тата облигацийĕн укçа тÿлĕнĕ чух вăхăтлăх квитанци парассĕç.

Çак йĕркесемпе Шупашкар хулинчи перекет кассисем ку займ облигацийĕсене малтанлăха сутма пуçланă та ĕнтĕ. Адресем: Центральная Сберкасса №60 (Красная площадь) и отделение 1 разр. №60 01 (при почте).

Районсенче—пур перекет кассисене те сутаççĕ.

60-мĕш № Тĕп Перекет Касси.

3—2

Шупашкарти пуçлăпа опытлă хуçайственник кирлĕ.

Хватĕрсем кирлĕ

Хак килĕшÿ тăрăх

Çак адресне пĕлтермелĕ: улица Карла Маркса, 328, Сойузкинохроника. Телефон № 3–12.

3—1

Шупашкарти туберкулÿоз диспансерне СТАТИСТИК-РЕГИСТРАТĂР

тата медицина ĕçне пĕлекен

СЕСТРАСЕМ КИРЛĔ.

„Сойуззаготскот"

Чăваш республикăнчи кантурне

Ревизор—1,
Машинистка—1

ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ

Ĕçукçи государствăн нормированнăй тăрăх

АДРЕС: г Чебоксары, Канашская 21, контора „Сойуззаготскот".

Горький шывçул техникумĕ

1938–39 вĕренÿ çулĕнче çак уйăрмасене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет:

Судоводитĕлсен,
Судомеханически,
Гидротехнически,
Електротехнически

Специальăйăссем тăрăх: а) радио, б) электроçыхăну тата в) электромеханически.

Производствăран уйăрăлмасăр вĕренмели каçхи уйăрăм

а) радио тата б) электромеханически. Вĕренме кĕмели условиесем шутти техникумсене кĕмели условиесем пекех.

Уйăрăх хулăсенчен пынисене вăлăн (квартер тупаймăннисене вăлăн) общежитири пур. 1-мĕш курса йышăннисенчен 60 процентне стипенди парассĕç. Стипендин кăм мĕнле вĕреннине кура 58 тенкĕрен 61 тенкĕ таран пулат.

Заявленисене августăн 10-мĕшĕчен йышăнаççĕ. Вĕренме кĕмели условиесене тĕлĕн пĕлес пулсан çак вăрсене ыйтса çырса йăмала:

Г. Горький, ул. Лядова, д. №. 6. ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 267.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 408.